Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

# Александр ДАВЫДОВ: «ХАМĂР ЯЛСЕМШĔН»



**Ĕçре хастар та мал ĕмĕтлĕ, çемьере лăпкă та шанчăклă, çын хушшинче ырă кăмăллă та тимлĕ – çакăн пек çынна эпир хаклатпăр, хисеплетпĕр. Александр ДАВЫДОВ çак йĕркене пăхăнма тăрăшать те.**

**– Александр Платонович, суйлав умĕн тем те шантараççĕ. Пуласлăх пирки мар, паян туса ирттерекен ĕçсем пирки калаçар-ха.**

– Çапла, шантарма тем те пулать. Илемлĕ сăмахсенчен ытла çынна ĕçĕпе хакламалла. Пире таçтан аякран никам та килсе пулăшмасть. Сакна тахçанах ăнланнă эпĕ. Ялти хăтлăхшăн, илемшĕн, пурнăçа лайăхлатассишĕн хамăрăн тăрăшмалла.

Ял çынни нихăçан та ĕçрен хăраман. Пахча çимĕçне те çитĕнтерет вăл, выльăх-чĕрлĕхне те тытать. Анчах вĕсене туса илсен те вырнаçтармалла вĕт. Çакă тепĕр чухне чĕр нуша, халăх асапланнине пĕрре мар курнă. Çавăнпа 2003 çулта “МилГрад” общество йĕркелерĕмĕр те. Вăл халăхран сĕт пуçтарассипе ĕçлет. Предприяти майĕпен сарăлса пырать, хальлĕхе Муркаш районĕнче çеç ĕçлетпĕр-ха, майĕпен, тен, Элĕке те çитĕпĕр.

Йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çуртсем (Дом быта) кашни районтах пур, вĕсем вăхăтĕнче çав тери лайăх ĕçленĕ. Калăпăр, пирĕн районтинче 200 ытла тĕрлĕ ĕç тунă: тумтир çĕленĕ, атă-пушмак юсанă, çӳç каснă... Анчах майĕпен вĕсем юхăнма, саланма пуçларĕç. 2004 çулта мана хамăр районти çак йăла çуртне чĕнчĕç. Унта кĕме хăрушăччĕ. Урамри алăк та пĕр тăпса çинче çеç тытăнса тăратчĕ. Юсарăмăр, çĕклерĕмĕр. Халĕ вăл тупăш паракан предприяти.

**– Паян предпринимательсенчен ытларахăшĕ суту-илӳре вăй хурать. Эсĕ вара тавар туса кăларассипе, тĕрлĕ пулăшу кӳрессипе, юсассипе ĕçлетĕн.**

– Çакă ĕçе ытларах çынна явăçтарма май парать. Халĕ пахча вăхăчĕ, хирсенче, пăхăр-ха, çĕр улмине хĕрарăмсем кăлараççĕ, миххисене вĕсемех йăтаççĕ. Пĕтĕм хуçалăх хĕрарăм çинче вĕт. Мĕншĕн тесен арçынсем Мускава укçа ĕçлесе илме тухса кайнă. Паллах, вĕсен те çемйипе пулас килет, тăван ялĕнче, тăван районĕнчех ĕçлес килет. Пирĕн “Моргаушрайбыт” предприятире эпĕ килнĕ чухне 19 çын ĕçлетчĕ, халĕ 59, тепĕр çĕвĕ цехĕ хута ярасшăн, эппин, тепĕр 15 çын валли ĕç вырăнĕ пулать.

**– Ялти хуçалăхсем юхăнни пăшăрхантарать.**

– Çапла, халĕ мĕн юлнисене те пулин арканма памалла мар, салатма çăмăл, пуçтарма, çĕклеме вара... Эпир пурте çĕр ĕçĕпе ĕçлесе ӳснĕ, халĕ, паллах, хирĕ-хирĕпе хыт хура кашланине курсан чун ыратать. Ас тăватăп-ха, аслă классенче комбайнпа ăмăртмалла ĕçлеттĕмĕр.

Манăн атте-анне те ĕмĕрĕпех çĕр çинче ĕçленĕ. Атте, Платон Павлович Давыдов, 25 çул “Ударник” хуçалăха ертсе пырать. Анне те унтах ветеринарта ĕçлетчĕ. Камăн та пулсан выльăхĕ чирлесен, колхозра тем сиксе тухсан, ирхине-и, çĕрле-и, çумăр çăвать-и, тăман вĕçтерет-и – тухса чупатчĕ. “Манăн вăхăт çук, пыраймастăп”, – тенине пĕрре те илтмен. Ларса канма та вăхăчĕ пулман пуль. Тен, çавăнпа нумай пурăнаймарĕ, 40 çултах çĕре кĕчĕ. Эпĕ ун чухне 16-раччĕ.

**– Халĕ ху та аçу-аннӳ ĕçне тăсатăн вĕт. Улми йывăççинчен аякка ӳкмест тесе ахальтен каламан.**

– Пирĕн районти Турайĕнчи колхоз арканнăччĕ, пĕр техника юлманччĕ. Çĕрĕсем пушă выртатчĕç. Пуçăнса пăхар терĕмĕр, 80 гектар çĕр улми лартрăмăр, майĕпен техникине те юсаса пуçтаркаларăмăр. Халĕ унта тепĕр 50 çын ĕçлет.

**– Паян яш-кĕрĕме ытларах сăра кĕленчипе курма пулать.**

– Ун пеккисем те пур, анчах пурте мар. Çамрăксене тĕрĕс çул кăтартмалла çеç, спортпа туслаштармалла, сывă пурнăç йĕркине хăнăхтармалла. Паллах, кунĕн-çĕрĕн ĕçсĕр çапкаланса çӳресен пуçа тем тĕрлĕ шухăш та пырса кĕрет. Ашшĕ-амăшĕ уйрăмах хулари ачи-пăчишĕн пăшăрханать. Ялта тем тесен те куç умĕнче.

Эпĕ ачаранпа спортпа туслă, йĕлтĕрпе ярăннă. Институтра вĕреннĕ чухне лекцисем хыççăнах тренировкăна васкаттăмăр. Ун чухне çакă йĕркеллĕ пулăмччĕ. Юлашки вăхăтра çакă манăçрĕ. Анчах мĕншĕн чĕртсе тăратас мар? Шупашкарта тренер тытатпăр, спортзал арендăна илетпĕр. Унта Элĕк, Муркаш каччисемпе хĕрĕсем çӳреççĕ. Тухăçĕ пур та ĕнтĕ, пирĕн çамрăксем волейбол выляса республикăра пĕрремĕш вырăн йышăнчĕç. Пушă вăхăтне усăллă ирттерччĕр, спортпа туслă çын пирус та туртмасть, эрех те ĕçмест. Халĕ тата тренажер залĕ те хута ярасшăн. Çамрăксене пурне те чĕнетпĕр.

Районта та çакăн пекех ĕçлетпĕр, спорт шкулне май килнĕ чухне пулăшатпăр. Пирĕн коллектив та спортпа туслă. Нумаях пулмасть çеç хамăр ентеше Олимп вăййисен чемпионкине В.Егоровăна халаллана ăмăртура çĕнтертĕмĕр.

**– Саша, эсĕ Турра ĕненетĕн-и?**

– Ĕненетĕп. Чиркĕве те çӳретĕп. Унта чун тасалать, шанăç çуралать, вăй кĕрет. Çавăнпах чиркӳсене юсама пулăшатăп та. Турайĕнче питĕ авалхи чиркӳ пурччĕ. Вăл культура палăкĕ те, çуртне авалах çăмарта хушса тунă. Ял халăхĕ çавна юсама ыйтрĕ. Малтанах шанманччĕ те, тем тесен те пысăк вăй кирлĕ. Çынсем хăйсем ĕçлеме хатĕррине палăртрĕç. “Мисе çын ĕçлеме хатĕр? Пухăнăр”, – терĕмĕр. Кунне палăртрăмăр. Çĕр çын килчĕ. Эппин, çак чиркӳ, чăнах та халăха кирлине ăнлантăмăр, Варнава митрополитран пил илтĕмĕр, халĕ чиркӳ çĕкленет. Шатракассинчи чиркĕве те çĕнетрĕмĕр.

**– Саша, çемйӳ валли вăхăт юлмасть те пуль?**

– Килти ытларах ĕçе мăшăрăн Татьянăн пурнăçлама тивет-тĕр. Анчах тăрăшсан вăхăтне тупма пулатех. Ĕç хыççăн чĕрçи çине хĕрĕм пырса ларать те, ывăнни иртет.

**– Пĕр ача çеç сахал мар-и? Халĕ Президент та ача çуратма хистет.**

– Паллах, сахал. Эпир хамăр та тăваттăн пĕртăван. Манăн атте çуралнă чухне асанне 55-ре, асатте 60 çулта пулнă. Эппин, манăн вăхăт самаях-ха.

**Надежда ИВАНОВА калаçнă.**

1973 çулхи ноябрĕн 25-мĕшĕнче Муркаш районĕнчи Анатри Панкли ялĕнче çуралнă.

Икĕ аслă пĕлӳллĕ: Чăваш патшалăх ял хуçалăх институчĕн зоотехника факультетĕнчен, И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн финанспа кредит факультетĕнчен вĕренсе тухнă.

1997-1998 çулсенче çарта пулнă, çĕршыв умĕнчи тивĕçне мирлештерекен дивизире пурнăçланă.

2003 çулта “МилГрад” общество йĕркеленĕ, 2004 çултанпа “Моргаушрайбыт” предприятие ертсе пырать.

Сывă пурнăç йĕркине сарнăшăн ЧР Спорт министерстви Хисеп тата Тав хучĕсемпе наградăланă.

Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕнче çак ыйтусемпе ĕçлеме палăртатăп:

* Ял çынни аякка каймасăрах лайăх ĕçлесе илме пултартăр, ялсенче çĕнĕ ĕç вырăнĕсем тумалла;
* Ял хуçалăх предприятийĕсене сыхласа хăварма, ура çине тăма пулăшмалла;
* Çамрăксене ялта хăварас тĕллевпе çурт-йĕр çавăрма çăмăллăхсем туса памалла;
* Ялсенче кĕçĕн шкулсене, медпунктсене сыхласа хăвармалла, вĕсене кирлĕ эмелсемпе тивĕçтермелле;
* Ялта спортпа культурăна аталантарма условисем туса памалла;
* Республикăра çулсем тума уйăрнă укçана айккине тăкаклама памалла мар.

Материал тӳлевлĕ пичетленет.

Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

ВЫБОРЫ ДЕПУТАТОВ ГОСУДАРСТВЕННОГО СОВЕТА ЧУВАШСКОЙ РЕСПУБЛИКИ

ЕДИНАЯ РОССИЯ

№1

8 октября Голосуем!

ЗА «ЕДИНУЮ РОССИЮ» — СИЛЬНУЮ ЧУВАШИЮ!

Материал печатается на бесплатной основе.

Мухтанатпăр эпир вĕсемпе

# Пурнăç илемлĕ пурăнма пĕлсен

Паян унталла-кунталла çиччĕ виççе пăхатăп та пурнăçăма ял хуçалăх, район аталанăвĕпе çыхăнтарнăшăн, атте-анне вĕрентĕвĕ мана çак çул çине тăратнăшăн пĕрре те ӳпкелешместĕп. Çак сăмахсемпе калаçăва хăй еккипе пуçларĕ Муркаш тăрăхĕнче (унта çеç те мар) паллă йĕр хăварнă, пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсемпе палăрнă, пурнăçа хаклама пĕлекен, паян кун та район пуласлăхĕшĕн хумханакан ятлă-сумлă Валериан Семенович Краснов. Эпĕ пынă самантра мăшăрĕпе Римма Алексеевнăпа иккĕшĕ те, тивĕçлĕ канура пулнăран, килçурт таврашĕнчеччĕ. Кунта тирпейлĕ, пурнăç пĕлтерĕшне мала хуракан çынсем пурăнни курăнчĕ.



Валериан Семенович Катькас ялĕнче 1938 çулта хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ. Паллă ĕнтĕ, ун чухне пурнăç пуриншĕн те йывăрччĕ. Хаяр вăрçă çулĕсем чылай çемьене йывăр хуйхăпа аптратнă. Вăл вăхăтри ачалăх кунĕсем вăйăкулăпа мар, терт-нушапа тулнă.

... Çирĕп чунлă яш пур йывăрлăха парăнтарса ура çине çирĕппĕн пусма пуçлать. 1957 çулта 1№ профтехучилищĕрен вĕренсе тухать. Хыççăн Киря поселокĕнче электромонтер ĕçĕнче вăй хума тытăнать. Астăна туптас, аслă пĕлӳ илес шухăш çамрăка канăç памасть. Чăваш патшлăх ял хуçалăх институтĕнчен агроном специальноçне алла илет. Çĕр ĕçĕ уншăн çывăх пулнăран “Передовик” хуçалăха ертсе пыма тытăнать. Ун чухне вăл кайрисен шутĕнчеччĕ. Выльăхсем валли улăмĕ те çукчĕ çитерме, выçăпа нушаланатчĕç. Вăл вăхăтра сарайсене улăмпа витнĕ, вара выльăха çавăнпа тăрантарнă. Çуркунне çитсессĕн акма тырри пулман. Ĕç дисциплинине çирĕплетсе пĕтĕм вăй-хала хурса, ĕçхалăхне хуçалăх ĕçĕпе интереслентерме тăрăшнă. Майĕпен “Передовик” хуçалăх малтисен ретне çитнĕ.

Валериан Семенович кăтартнă пысăк утăмсем ыттисемшĕн ырă тĕслĕх шутланнă. Пултарулăхне кура Валериан Семенович ӳсĕмлĕ ĕçлесе пынипе палăрать. Фермăсене механизацилес ыйтусем çине пысăк тимлĕх уйăрать. Механизациленĕ пĕрремĕш ферма та ăста ертӳçĕ ертсе пынипех ĕçлеме пуçлать.

1974 çулта районти ял хуçалăх управленийĕнче вăй хума тытăнать. Кунта та вăл фермăсене механизацилессипе тăрăшать. Вăл çулсенчи пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕçсем чылай. Фельдшерпа акушер пункчĕсем, врач амбулаторийĕсемпе капмар больницăсем Валериан Семенович тăрăшнипе пулнă ĕçсем.

Ятлă-сумлă çынна унăн ĕçĕсем татах та çӳлелле çĕклеççĕ. 1976 çулхи октябрь уйăхĕнче В. Краснова районти депутатсен сессийĕнче районти ĕç тăвакан комитет председательне суйлаççĕ. Пархатарлă ĕçсемпе палăрнă ентешĕмĕре 1979 çулта КПСС райкомĕн 1-мĕш секретарĕн тивĕçĕсене пурнăçласа пыма шанаççĕ. Çак çулсенче районта çĕнĕ шкулсем, ача сачĕсем, газ тата шыв пăрăхĕсем хурасси вăя кĕме пуçлать. Пĕрремĕш секретарь тивĕçĕнче 1990 çулччен тăрăшать.

Ял хуçалăх ĕçĕ уншăн çывăх пулнăран, вăл ертсе пынă çулсенче кăтартусем ӳснĕрен республика шайĕнчи ертӳçĕсем Чăваш Республикин ял хуçалăх министрĕн тивĕçне шанса параççĕ.

Малтуртăмлă, район аталанăвĕшĕн тăрăшакан специалист 1991 çулта “Моргаушская” чăхчĕп фабрикине ертсе пыма пуçлать. Валериан Семенович ертӳçĕ тилхепине алла илни кунти ĕçе йĕркене кĕртме пуçлать. Ӳсĕм çулĕ малалла туртăнни сисĕнет. Ăста специалист ертсе пыракан фабрика республикăра яланах малтисен ретĕнче, ыттисемшĕн ырă тĕслĕх шутланнă. Çакăн пек пултаруллă ертӳçĕ кирли никамшăн та вăрттăнлăх мар. Хăй вăхăтĕнче вăл района ура çине çирĕп тăратса ăна республикипе чапа кăларчĕ. Чăннипех çĕнелсе улшăнчĕ кунти пурнăç. Шутлатăн та, паян кашни ертӳçĕ çакăн пек чăннипех те халăхшăн чунне парса ĕçлесен, халăхăн татса паман ыйту та пулмалла мар. Валериан Семеновичран вĕренмелли нумай-ха хальхи ертӳçĕсен.

Ĕçне кура хисепĕ, теççĕ халăхра. Кунта та çавăн пекех, В.С. Краснова “Хисеп палли” орден (1971), Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ (1986), ВДНХ кĕмĕл медалĕсем (1974, 1976), Чăваш Республикин тава тивĕçлĕ агрономĕ (1975), РСФСР тава тивĕçлĕ ял хуçалăх ĕçченĕ (1999), Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Хисеп грамоти тата 20 яхăн Хисеп паллисем парса чысланă. Çавăн пекех Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутачĕ, Чăваш Патшалăх Канашĕн депутачĕ тата ытти шайри депутат пулма суйланă.

Пĕлĕвĕ пысăк пулин те ăна ӳстерессипирки шутланă. Мускав хулинчи аспирантурăра диссертацие хӳтĕлесе ял хуçалăх кандидачĕ ятне илет.

– Чăннипех те вăл вăхăтра çине тăрса ĕçлеттĕмĕрччĕ, район аталанăвĕшĕн кунне-çĕрне пĕлмесĕр тăрăшаттăмăрччĕ. Эпĕ ĕçе тухса кайнă вăхăтра çынсен хваттерĕсенче çутă та курăнмастчĕ чылай чухне. Ĕç хыççăн та вăрах юлма тиветчĕ, ачасем вăл вăхăта çывăрма кĕрсе выртатчĕç. Ирхине вара вăранма та ĕлкĕрейместчĕç. Тавах, юратнă мăшăрăма, Римма Алексеевнăна, мана йăлтах ăнланнăшăн, пулăшса пынăшăн. Эпĕ тунă ӳсĕмсен çурри, тем тесессĕн те, савнă мăшăрăн тӳпи. Чи пĕлтерĕшли – çемье ăшшине упраса, икĕ ывăла тĕрĕс воспитани парса пурнăç çулĕ çине кăларма пултарни.

– Çапла, эпĕ сахал мар ыйхă татнă çав çулсенче, – сăмаха пуçларĕ Римма Алексеевна. Халĕ ĕнтĕ иксĕмĕр те тивĕçлĕ канура. Валериан Семеновичпа иксĕмĕр пĕрле килĕштерсе хĕрĕх виçĕ çул хушши пурнăç çулĕпе алла-аллăн тытăнса утатпăр.

– Эпĕ 1958-1963 çулсенче Шупашкар хулинче аптека управленийĕнче вăй хутăм. Аслă ывăлăм çуралсан, ăна пăхса ӳстерес тесе тăрăшрăм. Ун хыççăн Муркаш районĕнчех ĕçлеме шутларăм. 1964-1968 çулсенче Катькасси ял Совечĕн бухгалтерĕнче ĕçлерĕм. Мăшăр “Передовик” хуçалăхра ĕçленĕ май эпĕ те 1968 çулта унта куçрăм. 1974 çулран пуçласа 2005 çулччен “Моргаушавтотехсервисра” кадрсемпе ĕçлекен инспекторта вăй хутăм.

Ывăлсене ура çине тăратма пултарнишĕн те савăнатăп. Асли, Саша, район администрацийĕнче ĕçлет. Кĕçĕнни, Эдик, ЧР Президент Администрацийĕнче консультант пулса вăй хурать. Вĕсен мăшăрĕсене те хамăр ачасем вырăннех хуратпăр. Икĕ мăнукăм пирĕншĕн – куç тулли савăнăç. Килсе сывлăхсемпе интересленни, эпĕ юратнă чечек çыххи парнелени е тата сăвăсем каласа хăпартлантарни, çакă пулать те ĕнтĕ пирĕншĕн паянхи кунăн телейĕ!

Октябрĕн 8-мĕшĕнче - ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсен суйлавĕ

## ЧР Патшалăх Канашне пĕр мандатлă 8-мĕш Муркаш суйлав округĕпе депутата суйлама тăратнă кандидат Владимир Алексеевич ГОРДЕЕВ



1953 çулхи ноябрĕн 15-мĕшĕнче Чăваш Республикин Элĕк районĕнчи Изванка ялĕнче нумай ачаллă хресчен çемйинче çуралнă.

1972 çулта Элĕкри вăтам шкултан вĕренсе тухнă хыççăн Владимир Алексеевич Гордеев Ленинград хулинчи 306-мĕш строительство управленийĕнче ĕçлеме тытăнать. Çав хушăрах строительство училищинче вĕренет. Училищĕрен вĕренсе тухсан В. Гордеев тренерсен шкулĕн бокс уйрăмне вĕренме кĕрет. Ленинград хулипе облаçĕн спартакиадисене хутшăнса малти вырăнсене йышăнать.

Владимир Гордеев темиçе хутчен те çĕршыври бокс енĕпе ирттерекен ăмăртусене хутшăннă, призлă вырăнсене çĕнсе илнĕ. 1976 çула Владимир Алексеевич Иванов-Франковск хулинче иртнĕ Пĕтĕм Союзри турнирта çĕнтернĕ, Ленинград хулинчи спартакиадăра чемпион пулса тăнă. Ăна “СССР спорт мастерĕ” ятне параççĕ. 1978 çултанпа В.А. Гордеев Мăн Вылă, Йăлкăш, Элĕк шкулĕсенче физкультура учителĕнче ĕçлет. Унăн вĕренекенĕсем Чăваш Республикин, Атăл тăрăхĕн, Раççейĕн чемпионĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем хушшинче – РФ спорчĕн 3 мастерĕ, спорт мастерĕн 13 кандидачĕ.

В.А. Гордеев 2001 çултанпа Элĕкри ачасемпе çамрăксен спорт шкулĕн преподавателĕнче ĕçлет. 1980 çулта ача-пăча спортне аталантарассишĕн ЦК ВЛКСМ знакĕпе наградăланă. 1997 çулта ăна “Чăваш Республикин физкультурăпа спортăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ” хисеплĕ ят панă. Владимир Гордеев – 1997 çултанпа ЛДПР организацийĕн Элĕк районĕнчи ертӳçи. 2004 çултанпа Патшалăх Думин депутатне пулăшаканĕ.

Владимир Алексеевич Гордеева ЧР Патшалăх Канашĕн депутатне суйлама ЛДПР организацийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕ кандидата тăратнă.

Материал тӳлевсĕр пичетленет.